Аслă Çĕнтерӳ ячĕпе саламлатпăр!

ХЫПАР

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

1999 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

18 (815) №, 2015, май/çу, 7 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/майăн 6-мĕшĕ тĕлне/

**ПАХЧАÇИМĔÇ**

| *Килограмм* | *тенкĕ* |
|---|---|
| Çĕрулми | 27-30 |
| Купăста | 50-55 |
| Сухан | 40-45 |
| Кишĕр | 45-50 |
| Ыхра | 170-200 |
| Хăяр | 70-130 |
| Хĕрлĕ кăшман | 40 |
| Помидор | 60-130 |
| Пылак пăрăç | 100-180 |
| Тăварланă хăяр | 120-150 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 100-120 |

**УЛМА-ÇЫРЛА**

| | |
|---|---|
| Панулми | 50-120 |
| Исĕм çырли | 120-200 |
| Апельсин | 70-120 |
| Лимон | 80-120 |
| Банан | 55-75 |
| Шур çырли | 300 |
| Кĕтмел çырли | 250 |
| Мандарин | 70-120 |
| Гранат | 80-120 |
| Сырлан | 200 |

**ÇĂНĂХ-КĔРПЕ**

| | |
|---|---|
| Тулă çăнăхĕ | 29 |
| Вир кĕрпи | 32 |
| Хура тул -»- | 56-60 |
| Тулă -»- | 25 |
| Манна -»- | 30 |
| Рис -»- | 52-56 |
| Пăрçа | 30 |
| * * * | |
| Сахăр песукĕ | 44-46 |
| Пыл | 350-400 |

**АШ-КАКАЙ**

| | |
|---|---|
| Ĕне ашĕ | 200-350 |
| Сысна ашĕ | 200-350 |
| Сурăх ашĕ | 200-350 |
| Пĕвер | 150-200 |
| Пӳре | 70-80 |
| Чăх | 180-200 |
| Кролик | 350 |
| Салă | 100-200 |
| * * * | |
| Çăмарта /теçетке/ | 48-64 |

**ПУЛĂ**

| | |
|---|---|
| Шăнтнă скумбри | 200 |
| -»- сельдь | 140 |
| Мойва | 160 |
| Горбуша | 300 |
| Шăла пулă | 180-250 |
| Çупах | 100 |
| Карп | 180-200 |
| Çуйăн | 200-300 |
| Çăрттан | 150 |

**СĔТ-ТУРĂХ**

| | |
|---|---|
| Сĕт /литр/ | 38 |
| Хăйма | 200 |
| Тăпăрч | 180-200 |
| Сыр | 200-300 |
| Услам çу | 200 |



## Утарти çуркунне

Çу уйăхĕнче юлашки сивĕсем иртеççĕ. Çĕмĕрт сиввi, юман çулçи тухнă вăхăтра. Пахчара улма-çырла йывăçĕсем çеçке çураççĕ. Шапа хупахĕ, ака уйăхĕнчех чечеке ларнăскер, май пуçламăшĕнче вăррине вĕçтерет. Хăлха çакки курăкĕ сарă çеçкепе ешĕл çарана тĕрлет. Ытти çурхи чечексем те вĕлле хурчĕшĕн пыл тума илĕртмĕш çимĕçсем. Вăйлă çемьесем çу уйăхĕнче 3-4 кг питĕ сиплĕ пыл хатĕрлеççĕ.

Сывă çемье тавралăхпа паллашса вĕçнĕ хыççăнах нектар, чечек тусанне /пыльцине/ пуçтарма пуçлать. Çу уйăхĕнче çемьесене тĕплĕн тĕрĕслемелле. Хурт амисĕр е вăйсăр амаллă çемье пур пулсан вĕсене вăйлă çемьесемпе пĕрлештерсе ямалла. Япăх амаллă çемьесене çамрăк ама тупса пани тĕрĕсех мар. Мĕншĕн тесен ама аталанса çитиччен, кирлĕ чухлĕ çăмарта хуракан пуличчен çемье пĕчĕкленсе вăйсăрланса юлать. Çакнашкал вĕллере кĕркуннеччен те хĕл каçмалăх пыл пуçтарăнмасть.

Çемьесене çак йĕркепе пĕрлештермелле:

1. Ĕçе каçхине е çĕрле пурнăçламалла. Кун пек чухне вĕсем çĕр каçипе хутăшса каяççĕ.

2. Пĕтнĕк е мелисса, е анăс курăкĕн настойкине шывпа хутăштармалла та икĕ çемьене те унпа пĕрĕхмелле. Хуртлă рамăсене тĕп çемьен йăви çумне лартмалла.

3. Пĕрлештернĕ çемьене çур литр сахăр сиропĕ парсан аван.

Вăйлă çемьен ами пĕтнĕ пулсан çемьене вăйлă ама туянса памалла. Лайăх амаллă пулнă çемье çу тăршшĕпех ĕçлесе савăнтарĕ. Ама хăй хакне ик-виç хут та саплаштарĕ.

Çу уйăхĕнче кашни вĕллене пăхса тухса ама хуртсене тĕрĕслемелле, япăххисене пăрахăçламалла. Ама ĕçленине кура вăл мĕнлине пĕлме пулать. Лайăх ама талăкра 2 пин таран çăмарта хывать. Çавна май пыл хурчĕсен йышĕ хăвăрт ӳссе пырать. Ама япăх пулсан пушă карас куçĕсем юлаççĕ, йĕркипе çăмарта хурса ĕлкĕреймест. Çавăнпа çемье вăйсăрланса юлать. Пыл та сахалрах пуçтарăнать.

Ама 5-6 çул пурăнать, çапах та тăваттăмĕш çултан аман тухăçлăхĕ чакать. Вĕллесене çутă тĕссемпе сăрласан аванрах: шурă, сарă, çутă кăвак. Çутă тĕслĕ вĕллесем çулла хĕвелпе ытлашши вĕрилентересрен хӳтĕлеççĕ.

Çу уйăхĕнчи сивĕсем иртнĕ хыççăн вĕлле хурчĕсем пайланма пуçлаççĕ. Ку тапхăрта вĕллене карас тума çĕнĕ ăвăс листасем хурса памалла. Вĕлле хурчĕсен ĕç хушăнать. Çулла çитнĕ майăн хурт çемйи пысăкланать, пыл нумайрах пуçтарăнать. Вĕллене çĕнĕ рамăсем лартмалла. Хушма вĕлле хашакĕсем лартса çӳллĕлетме юрать.

Çемье пайланма хатĕрленнине çак вĕллери хуртсем хытă сĕрленинчен, канăçсăрланнинчен пĕлеççĕ. Кун пек чухне çĕнĕ çемьене, пушă вĕллене явăçтарма тăрăшмалла. Утарçăсем вăйлă çемьесене пайлама малтанах хатĕрленеççĕ. Пайлама хатĕрленĕ вĕллен анине /летока/ çурмалла шалча лартса уйăрмалла. Вĕлле хурчĕсем çуррийĕ пĕр енчен, тепĕр çуррийĕ тепĕр енчен кĕрсе тухма тытăнаççĕ. Çакна хăнăхсан шалчаран икĕ еннелле пĕр пек хушă хăварса малтанхи вĕллене куçармалла тата тепĕр вĕлле лартмалла. Унта тĕп вĕллери карассене личинки мĕнĕпех çурмалла пайласа памалла. Уйран вĕçсе килекен хуртсем уйăрлса икĕ вĕллене вырнаçĕç.

## Ĕçлĕ сĕнӳ

Ĕмĕр тăршшĕпе юратнă ĕçпе аппаланнă майăн эпир нумай кирлĕ опытпа пуянланатпăр. Хăшĕ пахчинче томат питĕ ăнăçлă ӳстерет, теприн çулсеренех панулми аван пулать, виççĕмĕшĕ хурт-хăмăрпа аппаланса киленет.

Хисеплĕ вулаканăмăрсем, пахчаçимĕç çитĕнтерес е хуçалăхри урăх ĕçре сирĕнтен нумайăшĕн хăйне евĕр вăрттăнлăх пурах ĕнтĕ.

Çырсамăр, паллаштарсамăр хăвăр тĕслĕхсемпе. Эпир сирĕн сĕнĕве хаçатра пичетлĕпĕр, ыттисене паллаштарăпăр.

Çыру çырмалли адрес: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13 çурт, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" хаçат.

E-mail: hypar@mail.ru

Телефон: 56-15-30

## Халăх сăнанинчен

● *Çу уйăхĕнче икĕ хутчен сивĕ килет: çĕмĕрт çеçке çурнă чухне тата юман çулçă сарнă тапхăрта.*

● *Пĕр кун маларах акатăн – эрне маларах тухăç илетĕн.*

● *Çу уйăхĕн иккĕмĕшĕнчен шăпчăксем юрлама пуçласассăн çулла пуçланать.*

● *Май уйăхĕнче çумăр çусан ыраш ăнса пулĕ.*

● *Ака уйăхĕ çумăрлă – çу уйăхĕ курăклă.*

**Хамăр алăпа**

## Хăйра тăвар-и?

Халĕ кашнин килĕнчех килте усă курмалли тĕрлĕрен техника пур. Вăхăт иртнĕçемĕн техника юрăхсăра тухать. Моторĕ чиперех, хăйне юсама май çук.

30 çул каяллах соковыжималка туяннăччĕ. Пластик пайсем юрăхсăра тухрĕç, моторĕ аванах ĕçлет. Кăларса пăрахма шелперĕм те электродвигателлĕ хăйра ăсталаса пăхма шухăшларăм.

10 мм хулăнăш, варри 20 мм шăтăклă çаврака хăйра туянса электродвигателĕн тĕнĕлĕ çине винтпа çирĕплетсе хутăм. Ĕçĕ кăткăс мар, килте кашниех хатĕрлеме пултармаллискер çеç. Хăйра вара аванах ĕçлет. Унпа çĕçĕ çеç мар пуртă, кĕреçе-матик хăйрама питĕ меллĕ.

**Сергей ПОЛЕРОВ.**
Шăмăршă районĕ.

## Кун мĕнпе паллă

**07.05** – Радио кунĕ. Çыхăну тытăмĕнче ĕçлекенсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ.

**08.05** – Астăвăмпа килĕшӳ кунĕ. Пĕтĕм тĕнчери Хĕрлĕ хĕреспе Хĕрлĕ çуруйăх кунĕ.

**09.05** – Аслă Çĕнтерӳ Кунĕ. Гипертонипе кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери кун.

**10.05** – Амăшĕсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ.

**12.05** – Медицина сестрисен пĕтĕм тĕнчери кунĕ.

**13.05** – Раççейĕн Хура тинĕс флочĕн кунĕ.

## Вулакансем ыйтнипе

# Уя тухма хӑнӑхтармалла

**Ҫуркуннепе ӗнесене, сурӑхсене уя кӑларатпӑр. Уя тухма вӗсене мӗнле хатӗрлемелле-ши?**

**Раиса ШАРОВА.**
Етӗрне районӗ.

Ҫуркуннепе выльӑха уя кӑларассине тӗрӗс йӗркелемелле. Ешӗл курӑк ҫинче выльӑх хӑйне лайӑххах туять, сӗт те нумайрах антарать, сывлӑхӗ ҫирӗпленет. Выльӑха пӑхасси те кӗтӳ ҫӳреме пуҫласан самаях ҫӑмӑлланать. Курӑк ҫӑра та пахалӑхлӑ пулсан ӗне сакӑр сехет хушшинче 60 кг ытларах та курӑк ҫиме пултарать. Сайра та япӑх курӑк пулсан кун каҫиччен ӗне 25 кг ҫеҫ ҫиет. Ҫавӑнпа курӑк лайӑх ӳсиччен выльӑха ирхине тата каҫхине килте хушма апат памалла.

Шел те, нумайӑшӗ выльӑха кӗтӗве кӑларма пачах та хатӗрлемест. Ҫакӑ тӗрӗс мар. Ӗнене кӗтӗве кӑларма пӗчӗккӗн хатӗрлемелле. Ешӗл курӑк хӗллехи апатран раснарах. Ҫуркуннепе курӑк питӗ шывак. Тутлӑха тытма выльӑхӑн нумай ҫиме тивет. Ҫавна май тӑруккӑн чӗрӗ апат ҫине куҫсассӑн выльӑхӑн вар-хырӑмӗ пӑсӑлать, диарея пуҫланать. Шывак курӑк хырӑмлӑхри биофлорӑна пӑсать. Ҫавӑнпах сӗт антарасси чакать, выльӑх начарланать.

Тӳрех чӗрӗ курӑк нумай ҫитерсен ӗне кӳпӗнет. Ку уншӑн хӑрушӑ та.

Ҫурхи курӑкра кали нумай, натри вара сахал. Ҫавна май выльӑх тарлать. Тӑвар шайлашулӑхӗ ан пӑсӑлтӑр тесе выльӑха ҫуламалли тӑвар катӑкӗ хурса памалла.

Кӗтӗве малтанхи кун кӑнтӑрла тӗлнелле ҫеҫ уя кӑлармалла. Ирӗкре 3-4 сехетрен ытлашши ҫӳретмелле мар. Пӗр-пӗрне хӑнӑхиччен ӗнесем тӗкӗшме пултараҫҫӗ. Кӗтӗве хӑнӑхтарма малтанхи кунсенче хуҫисем пӗрле ҫӳресен вырӑнлӑ. Сыхӑ пулмалла, кирлӗ чухне аяккала ҫавӑтса каймашкӑн пӑяв илмелле.

Ирхине выльӑха утӑ ҫитермелле. Утӑра клетчатка нумай, ҫурхи курӑкра вара клетчатка ҫителӗксӗр. Уйра ҫӳрекен вӑхӑта кунсерен тӑсса пымалла. Ӗнесем пӗр-пӗрне хӑнӑхса ҫитсен, лӑпкӑ ҫӳреме пуҫласан кӗтӗве касчченех ҫӳретме юрать. Выльӑх пӑхаканӗн кӗтӗве тимлӗ сӑнаса тӑмалла: ҫурхи курӑкпа кӳпӗнекен ӗнесем пулма пултараҫҫӗ. Чирлӗ ӗнесене кӗтӳрен кӑлармалла, пулӑшу памалла.

# Чӑх е автан?

**Тепӗр чухне чӑх-чӗп сутакансем талӑкри чӗпсене ҫӑмарта тӑвакан чӗпсем тесе сутаҫҫӗ те ӳсессӗн ҫуррине яхӑн автан пулать. Ҫӑмарта тӑвакан чӑхсем пулакан талӑкри чӗпсене ӑҫтан туянмалла-ши? Талӑкри чӗпсене автан е чӑх пулнине мӗнле пӗлмелле?**

**З.МИХАЙЛОВА.**
Шупашкар районӗ.

Пысӑк инкубаторсенче чӗпӗсене ятарлӑ мелпе тӗрӗслеҫҫӗ. Вӗсен шутне колор тата федерсексинг мелӗсем кӗреҫҫӗ. Тепӗр мел – инкубаторсенче тин ҫеҫ тухнӑ, типшӗннӗ /талӑка ҫитиччен/ чӗпӗсене ятарлӑ мелпе кутанине пусаҫҫӗ. Автанӑн кутанинче автан тӗмекӗ курӑнать, чӑхсен ҫав тӗмек ҫук-мӗн.

Халӑх сӑнанӑ мелсене илсе кӑтартӑпӑр. Талӑкри чӗпӗсене туяннӑ чухне лайӑх сӑнамалла. Чӑх пулакан чӗпсем кӑштах пӗчӗкрех. Автансен хӳре вырӑнӗ кӑшт тӗпеклӗрех тӑрать. Чӑхсен хӳре тӗлӗнче тӗпекленсе тӑмасть, ҫавра, яка пулать.

Чӗппе ӗнсинчен тытса ҫӗклемелле. Автан урисене ҫаплипех аялалла усса тӑрать. Чӑх пулаканни урисене ҫӗклет, хӑй ҫумне лӑпчӑтать.

Чӗппе урисенчен тытса кутӑн ҫӗклемелле. Автан пуҫне усса тапкаланмасӑр тӑрать. Чӑх пулаканни пуҫне ҫӗклеме хӑтланать, турткалашать. 70-80% тӗрӗс тесе палӑртаҫҫӗ.

Ик-виҫӗ эрнери чӗпӗсен автан пулаканнин киккирикӗ хӗрелет, хӳре вырӑнӗ лайӑх тӗмекленсе тӑрать. Чӑх пулаканнин киккирикӗ шуранка.

Паллах, асӑннӑ мелсемпе чӑх е автан пулнине тӗп-тӗрӗс пӗлме май ҫук. Халӑх ҫирӗплетнине шута илмесӗр те тӑраймӑн. Ӑна сутуҫӑсем те пӗлеҫҫӗ. Туяннӑ чухне тӗрӗслесе пӑхӑр. Сӑнавсем чӑна килсен хӑвӑр та ыттисене сӗнме пултаратӑр. Сӑнав пирки хаҫата ҫырса ярсан та аван пулӗччӗ.






## ҪАНТАЛӐК

| | кӑнтӑрла | ҫӗрле |
|---|---|---|
| 07.05 | + 12 | + 3 |
| 08.05 | + 13 | + 4 |
| 09.05 | + 13 | + 1 |
| 10.05 | + 14 | + 8 |
| 11.05 | + 13 | + 7 |
| 12.05 | + 16 | + 6 |
| 13.05 | + 17 | +10 |

## КУН ТӐРШШӖ

| | | Уйӑх кунӗ |
|---|---|---|
| 07.05 | 15.44 | 19 у.к. |
| 08.05 | 15.48 | 20 у.к. |
| 09.05 | 15.52 | 21 у.к. |
| 10.05 | 15.56 | 22 у.к. |
| 11.05 | 16.00 | юлашки чӗрӗк |
| 12.05 | 16.04 | 24 у.к. |
| 13.05 | 16.08 | 25 у.к. |

Кун тӑршшӗ 16 сехет те 8 минут пулать, 9 сехет те 8 минут вӑрӑмланать.

# Сирень асамӗнче

– Сирӗн пахчара сирень тӗмӗ ҫитӗнет-и? Нумайӑшӗ «ҫапла» тесе хуравлӗ. Тӗрӗс те. Тахҫантанпах пӗлетпӗр ҫак ырӑ шӑршлӑлӑ илӗртӳллӗ тӗме. Унӑн шӑрши аякка сарӑлса хӑй патнелле туртать. Кил умне лартнӑ сирень ҫеҫкине хуҫи куриччен татса илеттӗмӗр, пилӗк ҫеҫкеллӗ чечекне шыраттӑмӑр. Пилӗк ҫеҫкелли телейлӗ тесе ҫисе ямаллаччӗ... Сирень ҫыххине ҫывӑрмалли пӳлӗме лартма юрамасть тетчӗҫ – пуҫ ыратакан пулать ирччен. Ара, шӑрши вӑйлӑ-ҫке.

Тӗрӗссипе, капӑр сирене халӑх медицининче ӗлӗкренпех усӑ кураҫҫӗ. Сипленмешкӗн сирень папки те, чечекӗ те, ҫулҫи те юрӑхлӑ. Уйрӑмах сирень чечекӗн спиртлӑ настойкине хатӗрлеҫҫӗ. Ӑна сыпӑсем ыратсан, остеохондрозран, ревматизмран, тӑвар пуҫтарӑнсан усӑ кураҫҫӗ. 1 пай сирень ҫеҫкине 10 пай шур эрех /водка/ ямалла та икӗ эрне сивӗтмӗшре тытмалла. Ҫак шӗвеккине ыратакан вырӑнсене сӑтӑрмалла, ҫывӑрма выртнӑ чухне компресс хумалла. Пӗрер чей кашӑкӗ кунне 2-3 хутчен ӗҫмелле.



Сирень ҫулҫин настойкипе радикулитран сипленеҫҫӗ. Настойкӑпа сӑтӑрнипе чирлӗ вырӑнта юн ҫаврӑнӑшӗ лайӑхланать.

Сиренӗн чӗрӗ ҫулҫине лутӑркаса ҫемҫетсе суранланнӑ тӗле хумалла, ҫыхмалла. Суран хӑвӑртрах тӳрленӗ.

Сунас ерсен, хырӑмлӑх чирӗсенчен, сывлӑш пӳлӗнсен сирень чейӗ пулӑшать. 100 г чӗрӗ ҫеҫкене термоса хумалла та 750 г вӗрекен шыв ямалла. Кунӗпех ҫак чее пӗчӗкшерӗн ӗҫмелле.

Асамлӑ сирень ҫеҫки ӳте тасатать, пӳрлешкесене сиплет. Сирень чечекне тата ҫӑка чечекне /ҫӑка ҫеҫки типӗтнине илмелле, вӗсем пӗр вӑхӑтра чечекленмеҫҫӗ/ пӗр виҫепе илмелле, вӗрекен шыва ярса пӑшӑхламалла, пите ӑшӑ пӑс ҫинче тытмалла. Ҫу тата тар парӗсем тасалса вӑйланаҫҫӗ, пит якалать.

Сиреньпе усӑ курнӑ чухне ҫакна та шута илӗр. Тӗрлӗ настой, маска, отвар тума ҫеҫке е ҫулҫӑ пуҫтарнӑ чухне тӗм сывӑ та паха пулмалла. Хӑрма пуҫланӑ ҫеҫкен усси сахалрах. Аслӑ ҫулсем хӗррипе ӳсекен сиреньпе сипленме юрамасть. Мӗншӗн тесен сирень ытти ӳсентӑран пекех сывлӑшри сиенлӗ хутӑшсене пуҫтарать.

Сиреньпе сипленнӗ чухне тухтӑр ҫырса панӑ сиплеве ан пӑрахӑр, аллерги ҫуккине тӗрӗслӗр.

# Купӑста лартар-ха



Купӑста ҫитӗнтересси йывӑр ӗҫ мар. Вӑл сивве тӳсӗмлӗ, лайӑх ӳсекен пахчаҫимӗҫ. Ирхи купӑстана килте калчалантарса е тӳрех йӑран ҫине акса ҫитӗнтерме пулать. Шӑтса тухса аталаннӑ вӑхӑтра купӑстана тимлӗх ытларах кирлӗ. Мӗншӗн тесен ҫамрӑк ӳсен-тӑрана хурт-кӑпшанкӑ пӗтерме пултарать: уй пӑрҫи, купӑста шӑни хытӑ тапӑнаҫҫӗ. Каярах купӑста лӗпӗшӗн хурчӗ, купӑста пыйти тапӑнать.

Калча тума акнӑ чухне тӑпрана чир-чӗртен тасатма 80 градуса ҫити хӗртсе илмелле. Вӑрлӑх шӑтса тухсан йывӑҫ кӗлӗ сапмалла. Калчана уҫӑ йӑрана 4-6 лайӑх ҫулҫӑ тухсассӑн куҫарса лартмалла, йӗри-тавра тӑпрана пусармалла, шӑвармалла, ирсерен е каҫхине лайӑх чӗрӗличчен шӑварса тӑмалла. 10 кунран йывӑҫ кӗлӗпе сапмалла, кашни икӗ-виҫӗ эрнерех кӗл сапни вырӑнлӑ. Вӑл ӳсен-тӑрана хурт-кӑпшанкӑран хӳтӗлени те, апатлантарни те пулать.

Купӑстана тӗштырӑ, сухан, пӑрҫа йышши тата тымар ҫимӗҫсем хыҫҫӑн лартмалла. Пулӑхлӑ тӑпра ҫинче аван ҫитӗнет, лартас умӗн тӑпрана ҫӗрнӗ тислӗкпе хутӑштармалла.

Ир пулакан купӑстана уҫӑ йӑрана май уйӑхӗн пуҫламӑшӗнчех лартма юрать. Хӗл валли кӗрхи сортсене суйламалла. Вӗсене йӑран ҫине июнь уйӑхӗнче ҫеҫ лартмалла. Эппин, калчана каярах ҫеҫ хатӗрлемелле. Кӗрхи сортсене маларах лартса ҫитӗнтерсен вӗсем кӗркуннепе ҫурӑлса каяҫҫӗ. Ҫурӑлнӑ пуҫсем хӗл валли упранмаҫҫӗ.

# Садра йывӑҫ-тӗме еплерех вырнаҫтармалла?

**Груша** улмуҫҫи пек мар, ӑшша ытларах юратать, сивве чӑтӑмлах мар. Вӑл пулӑхлӑ ҫӗр ҫинче лайӑх ӳсет, ҫимӗҫне те хӑвӑртах пама пуҫлать. Ӑна кӳршӗ лаптӑкри йывӑҫ-тӗмрен 3 метра лартмалла.

Дачӑра е ялти садра кӳршӗсем чикӗ хӗррипе пӗр пек культурӑсем лартни питех те аван, калӑпӑр, чие е иҫӗм ҫырли. Вӗсемшӗн микроклимат лайӑхланать.

**Чие тӗмӗ** ҫӳллӗрех вырӑна, тӑмлӑ тӑпрана килӗштерет.

Ҫутӑ чи лайӑх лекекен лаптӑка **хурӑн ҫырли, сырлан, хурлӑхан, хура пилеш** валли уйӑраҫҫӗ.

**Сырлан** хӑйӑрлӑ, ҫӗрӗк тӑприпе пуян ҫӗр ҫинче лайӑх ӳсет. «Хӗрарӑм» тӗмӗпе пӗрле «арҫынна» лартма ан манӑр.

**Хӗрлӗ** тата **шурӑ хурлӑхана** хӑйӑрлӑ тӑпра ҫине лартмалла. **Хури** – нӳрӗке юратакан культура.



# Пӗлетӗр-и?

- Шурӑ упапа арӑслан ҫапӑҫма пуҫласан хӑшӗ ҫӗнтерет – шурӑ упа.
- Вунӑ тӑваткал метр тропик вӑрманӗнче хурт-кӑпшанкӑ Новосибирск хулинчи халӑх йышӗнчен нумайрах.
- Ҫеҫенхирти пӗр тӑваткал ҫухрӑмра хурт-кӑпшанкӑ ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи халӑхран йышлӑрах.
- Бордер-колли ӑратлӑ йытӑсем чи ӑслисем шутланаҫҫӗ.
- Тӗве шыв ӗҫмесӗр икӗ эрне чӑтма пултарать.
- Жираф вара тӗверен те ытларах шывсӑр тӳсеет.
- Йӗкехӳре пысӑк чӗрчунсенчен чи тӳсӗмли – жирафран та ытларах шывсӑр пурӑнать.
- Уссури тигрӗсем чи пысӑккисем. Вӗсен ҫӳллӗшӗ 115 см, пӗвӗн вӑрӑмӑшӗ 3 метр ытла, виҫи 280 кг ҫитет.

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА ПӖЛТЕРӲ
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчӗ, 13-мӗш ҫурт, 316-мӗш пӳлӗм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

## ӖҪ РАБОТА

**54.МОНОЛИТЧИКИ, КАМЕНЩИКИ** – в Подмосковье. Т. 89176737773.

**102.Требуются монолитчики** – в Москву. Жилье, 3-разовое питание предоставляются. Оплата сдельная, в конце вахты – от 55-65 т.р. Т.: 8-937-013-48-95, 8-927-868-34-68.

**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.

## ПАЛЛАШУ КӖТЕСӖ

48-ти арҫын ялта пурӑнма килӗшекен пӗччен хӗрарӑмпа паллашасшӑн. Ӗҫмест, туртмасть.Вӑрнар р-нӗ. Т. 8-987-665-80-62.

## ПУЛӐШУ УСЛУГИ

**313.ДОСТАВКА** гравмассы, песка /речного, карьерного/, щебня, торфа, навоза. Т.: 8-960-308-08-54, 8-917-066-04-80.

**314. Бурение колодцев. Продажа** к/колец. Т. 89276670803.

Мини-тракторы, мотобуксировщики, **МОТОБЛОКИ**, косилки роторные, двигатель дизельный 18 л. с., доильные аппараты. **Ремонт. Гарантия.**
Маг. «Каскад», г. Чебоксары, ул. Университетская, 10, ост. «ул. Ахазова». **Тел. 41-59-83.**

**МОТОБЛОКИ.**
**Ставлю двигатели "Subaru" /пр-во Япония/ на отечественные мотоблоки.**
Маг. "Каскад", г. Чебоксары, ул. Университетская, 10, ост. "ул. Ахазова". **Тел. 41-59-83.**

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
**РЕКЛАМА ПĔЛТЕРĔ**
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**Изготовление в короткие сроки.**
**Гарантия качества**
**Скидки до 30 %**
**Тел. 89176594701.**

## ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**36.Известный чебоксарский экстрасенс, хиромант** – сниму порчу, поставлю защиту, помогу в решении семейных и финансовых проблем. Т. 89063808628.
**38.Чистка колодцев.** Т. 8-961-342-90-59.
**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 89030662902, 89276673368. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*
**46.Бурение** колодцев, **углубление; продажа и д-ка** ж/б колец. bur.21.ru. Т. 89053434207.
**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца** колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.
**57.Свадьбы, юбилеи** – тамада, диджей, «Уяв». Т. 8-937-375-63-78, Мила.
**82.Экстрасенс.** Тел. 89876603929.
**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.
**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 89033220479.
**191.Обшивка сайдингом, утепление, кровля.** Т. 462777.
**246.Бурение скважин на воду** до 50м. Чистка старых скважин. Т. 8-906-381-60-37.
**258.Бурение скважин на воду.** Тел. 8-960-301-25-13.
**259. Бурение скважин на воду.** Тел. 8-927-991-66-99.
**260.Бурение скважин** /до 90 м./. Недорого. Т. 89278625531.
**263.Кровельные работы,** демонтаж; **металлочерепица, профнастил.** Т. 89373744701.
**278.Монтаж забора:** профлист, рабица. Т. 89022872777.
**285.Доставка грузов:** щебень, песок, ОПГС, чернозем, навоз. Т. 8-987-669-29-41, Алексей.
**288.Обшивка домов** сайдингом, вагонкой; **каркасное строительство** домов. Т. 89373744701.
**292.Кровля. Фасады. Брусчатка.** Т. 8-903-064-40-32.

## ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.
**28.Вăкăр,** ĕне, **тына, сысна амисем.** Т. 8-927-999-37-37.
**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89603109878.
**50.Коров.** Т. 89278508564.
**108.Тёлок, коров.** Т. 8-937-014-49-97.
**729.КРС** – по высоким ценам. Т. 8-906-132-76-04.
**298.ПОРОСЯТ – дорого,** круглый год. Т. 89063825331.

## С У Т А Т Ă П   П Р О Д А Ю

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900р., прихожие от 3600р., шкафы от 3300р., комоды от 2300р., столы от 1000р., кровати от 4000р. Доставка, сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24. **Сайт:** www.ex-comfort.ru.
**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. Т. 8-967-470-46-77.
**3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, керамзит. Доставка. По низким ценам. Т. 8-967-470-46-77.
**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. Т. 8-987-576-65-62.
**5.БЛОКИ** керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные, заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, **документы.** Т. 8-960-301-63-74.
**6.КРОВАТИ** от 2000 р. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Т.: 89278441501, 674642.
**7.ГРАВМАССУ,** песок, **щебень, керамзит,** чернозём. Дешево. Доставка. Т.: 89276689713, 38-97-13.
**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.
**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дешево. Доставка. Т.: 8-903-358-30-21, 44-30-21.
**10.Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.
**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.
**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Согнем любые доборные элементы для кровли и фасада. Т. 44-44-33.
**15.Кирпич, песок.** Т. 8-961-339-33-63.
**17.Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.
**19.КИРПИЧ** красный, силикатный, **гравмассу,** щебень, **керамзит,** песок, кольца, **к/б блоки.** Т. 8-927-862-91-66.
**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.
**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**
**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.
**24.ГРАБЛИ,** косилки, сажалки, **копалки,** окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 8-927-853-35-96.
**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.
**30.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.
**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.
**33.Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.
**34.Гравмассу,** песок, **щебень, керамблоки.** Доставка до 25 тн. Т.: 89176500385, 89603073399.
**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.
**37.Ворота,** калитки, заборы, навесы, **ТЕПЛИЦЫ. Кровля,** обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 89022881447, 387574, metalservis21.ru
**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.
**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.
**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 89053447932.
**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.
**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Низкие цены. Тел. 48-16-54.
**67.БЛОКИ керамзитобетонные,** тротуарные плиты, песок. Доставка. Тел. 8-917-676-27-37.
**71.ПИЛОМАТЕИАЛ** /хвоя, береза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова, горбыль.** Т. 89033891400.
**74.Керамблоки** вибропрессованные, пропаренные. Все размеры. Доставка. Т. 89176776846.
**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.
**76.Срубы** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.
**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. **Доставка.** Документы. Т. 89373866629.
**93.Кирпич красный** одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, половняк, **КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.



**95.ТРУБЫ ВИТЫЕ,** офактуренные; **кованые элементы** в ассортименте. Т. 8-927-844-15-01.
**120.ПЕНОПОЛИСТИРОЛ–ПЕНОПЛАСТ,** теплоизоляционный материал. **НИЗКИЕ ЦЕНЫ.** ДОСТАВКА. Прием заказов по тел. 8-917-078-99-45.
**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.
**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.
**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.
**132.УЛЬЯ новые.** Т. 89603091414.
**133.СЕТКУ–РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, сетку сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку, столбы.** Доставка. Т.: 683045, 89379522211.
**138.ОКНА, ТЕПЛИЦЫ, обшивка** домов, двери /сталь/. Гарантия 15 л. Скидки 40 %. Т. 89196624097.
**141.СРУБЫ** /6х3,4х3/ + **комплектация.** Тел. 8-937-396-91-01.
**143.ТЕПЛИЦЫ от производителя** – от 5950 руб. Т. 89276682828.
**154.ОКНА и ПОТОЛКИ** – немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. Пенсионерам скидки. Рассрочка. Т. 89176627164.
**170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.
**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.
**174.МОГИЛЬНЫЕ ОГРАДЫ, заборы, ворота** и др. изделия от производителя. Т. 89276682828.
**178.Гравмассу, песок, керамзит,** бой кирпича, **щебень.** Пенсионерам – скидки. Т. 89176769379.
**180.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, **муку.** Доставка. Т. 89373916016.
**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.
**188.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-927-846-24-10.
**190.Теплицы** от производителя – 5700 руб. Т. 8-902-287-27-77.
**194.**В мешках и россыпью **навоз, торф, песок.** Т. 89276682590.
**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.
**207.Триколор ТВ.** Т. 89674704384.



**211.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** 3х4, 3х6, 3х8, 3х10. В наличии. Доставка по ЧР. **Тел.: 48-08-23, 36-06-16.**
**230.Цыплят, кур** разных пород, **индоуток,** цесарок, перепёлок, **индюшат.** Т. 89613420088.
**231.**Ленточные **пилы по дереву.** Дисковые и рамные пилы. **Станки.** Т. 8-927-668-02-12.
**232.Заменитель цельного молока** для телят и поросят. Т. 89876681717.
**241.Бетон,** раствор, **ж/б изделия, пиломатериалы.** Д-ка по Чувашии. Т.: 89278535732, 89373918648.
**251.МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦУ,** профнастил, металлосайдинг, пластиковые окна. Доставка, замеры. **СТРОИТЕЛЬСТВО.** Т. 8-919-653-43-68.
**254.Песок, гравмассу, торф,** навоз, **чернозём.** Доставка. Т. 89196503991.
**257.Кондициллĕ сĕлĕ вăрлăхĕ.** 1 кг хакĕ – 10 тенкĕ. Муркаш районĕ. Т. 89063856449.
**265.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89875768286.
**269.ОКНА и ПОТОЛКИ.** Доступные цены. Профессиональный монтаж. Рассрочка. **Майские скидки.** Т. 89196691666.
**270.Кольца колодезные** 0,7м, 1м, 1,5м. Д-ка. Установка. Т.: 36-26-23, 8-903-379-77-68.
**273.Месячных бычков** по 8000 р. Доставка по ЧР. Т.: 89176641716, 89196690171.
**284.Канашскую гравмассу,** песок, щебень, грунт, навоз. Т. 8-909-302-09-58.
**287.Кирпичный ДОМ** с земельным участком, надворными постройками в Моргаушском р-не. От города 40 км, по трассе М7. Тел. 8-927-865-32-37.
**293.СРУБ** – в Канашском р-не. Т. 8-903-064-40-32.
**295.Песок,** ОПГС, **щебень,** известь, асфальтную крошку, **навоз,** землю, **торф.** Доставка. Т.: 89196741016, 89603003816.
**296.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89613429059.
**299.УДОБРЕНИЕ** – аммиачную селитру /мочевину/. Т. 8 /8352/ 37-20-56.
**301.ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната. Т. 8-927-665-61-75.
**302.Кĕрхи çăм.** Т. 89278515394.
**303.ПЧЕЛОСЕМЬИ.** Т. 89053404552.
**304.Вĕлле хурчĕ.** Т. 89373702829.
**310.Распродажа б/у ЖБИ:** плиты покрытия, фундаментные блоки, перемычки, прогоны, фермы, лестничные марши. Изготовлено строго по ГОСТу. Возможна доставка. Т. 89613448801.
**316.Пчелосемьи.** Т. 8-927-857-33-85.

«ХЫПАР»

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăлă коммуникацисен министерстви "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

**Директор-тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ**
**Редактор Э.Н.ИВАНОВА**

**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:**
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Кил-çурт, хушма хуçалăх".
**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:**
56-15-30, 56-00-67.
**коммерци директорĕ:**
28-83-70,
56-20-07 – инспекторсем.

**Факс:** /8352/ 28-83-70.
**Электронлă почта:**
hypar@mail.ru
hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

**Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăлă коммуникацисен сферинчи надзор служби нче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленĕ.**

06.05.2015. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла. 16 сехетре алă пуснă.
**Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.**
Тираж 15938. Заказ 1719.